**Хветĕр УЯР**

*Т. НЕМЦЕВА ӳкерчĕкĕсем*

# ПĔР АЦА ПУРНĂÇĔПЕ ВИЛĔМĔ

Китай ачи Ли Хуан тăсти ют хирте, тăван килĕнчен инçетре-инçетре тĕлĕк курса выртать. Тул çутăлса килет пек. Ли хăйсен енчех иккен, уй хуралĕнче тăрать. Вăрман сăмсахĕнчи вир ани çине хир сыснисем тухнă, павлин хӳри евĕрлĕ ярапаланса кайнă пучахсене сăтăра-сăтăра хыпса, ана варринелле кĕрессĕ. Ача вĕсем чаплаттарса чăмланине те чиперех илтет пек. Анчах хăй чупмасть сыснасене хирĕç патак йăтса. Урисем утмассĕ ун темшĕн.

Хăратма туса лартнă çын кĕлетки тĕлĕнче кайăксыснасем тем пирки çапăçма тытăнчĕç. Ну кĕрмешессĕ, ну çухăрашассĕ. Хĕпĕртет Ли, чикесĕр савăнать. Ача — ашшĕне курать пек. Мĕнле тупăннă вăл, эсрелсем* тытса кайнăскер? Вĕсене, Ли ашшĕпе амăшне, иккĕшне те вĕлерне теместчĕç-и вара? Вĕсем вилнĕ тенине ĕненмесĕр Ли тĕрĕсех тунăмĕн. Хулă йăтнă ашшĕ хир сыснисем хыççăн чупать пек. Унăн сăнне лайăххах астуса юлас тесе, Ли ӳпленен тухать...

«Ку тĕлĕк чăн пултăрах, тĕлĕк тӳрре килтĕрех»,— тесе йăлăнать пек ача. Шăрчĕсене тăратнă сыснасем вăрманалла ыткăнассĕ. Вир хуралĕнче ӳплере çĕр каçнă Ли ашшĕне юнашар килнелле утать. Унта мĕн кĕтнине пĕлекен пĕчĕкçĕ чун чарĕччĕ ашшĕне яла кĕме — пĕр пулса иртнĕ тискерлĕхе пулма епле чарăн?

Ял çумĕнчи ту айккине чава-чава кĕрсе, вĕçрен вĕçе çĕрпӳртсем туса пĕтернĕ. Лисен фанзи чи хĕрринчи те чи пĕчĕкки. Ку вăл çук çынсен урамĕ. Чи нумай илтĕнекен сăмах та унта çавă: çук. Укçа çук. Çимелли çук. Тумтир çук... Арçынсем те çук ку урамра: мĕнле те пулин йӳнеçме ĕмĕтленсе, тĕнче тăрăх сапаланса пĕтнĕ: хуçасем патне тарçа-тĕрçе кĕнĕ, хулара кули (йывăр йăтакансем) пулса ĕçлессĕ, пĕчĕк урапана кӳлĕнсе, рикшăра чупассĕ. Анчах чухăнлăхран пурпĕр хăтăлаймассĕ. Ли ашшĕ вискемкун таврăнман пулсан, вĕсем те выçă ларатчĕç. Халĕ ав Лисен пӳрчĕ енчен мĕнле тутлă шăршă кĕрет. Амăшĕ çатмапа темĕн ăшалать ĕнтĕ.

Пĕр кун маларах ашшĕ урамри ватăсемпе калаçса ларнине илтнĕ те Ли çĕрĕпе пуласлăх çинчен шухăшласа выртнă. Ун ашшĕ таçта çурçĕр енчи хулара ĕçлесе пурăннă иккен. Унтан инçе те мар, чикĕ леш енче кăна, вырăссен çĕрĕ пуçланать, тет. Кашни ĕçлекен çын тутă, тет унта. Кашни ача шкула çӳрет, тет. Халь кунта ашкăнакан япунсем пек çичĕютсене вырăссем (ши бу-ши) хуса кăларса пĕтернĕ, тет. Ли ашшĕ ăна амăшĕпе пĕрле хăй ĕçленĕ хулана илсе каясшăн.

Эттенччĕ те вĕт! Тем пекехчĕ. Часрах çитсе курасчĕ вăл çĕршыва. Вара, чикĕ урлă каçса, вĕренме кĕрĕччĕ Ли. (Чикĕ тенĕрен, мĕнле япала-ши вăл? Путех, анасем хушшинчи йăран пекскер пуль. Ун урлах каçса çӳреме пулĕ-ха, тесе шухăшлать ача.)

Çапла, курманнине курас килет ун, анчах çуралнă вырăна та шел пек. Çанталăк мĕнле ăшă кунта. Лисен умĕнчи пĕчĕк юханшыв яка чулсем çийĕпе мĕнле илемлĕн шăнкăртатса юхать, вăрттăн кĕвĕ калать тейĕн. Кунти чĕрчунсем мĕн тери ăслă тата?! Лисен шурă куçхаршиллĕ хура сысна çури хăйне хăех тăрантарма пĕлет, ав. Ирхине, нăрх-нăрх туса, сăрталла хăпарса каять те вăл, кун каçипе пĕрре килсе шыв хĕрринче сулхăнта выртса каннине шутламасан, кунĕпе сăрт хушшинче ирттерет. Каç енне вара хырăмне панк тултарса таврăнать. Мĕн çиет-ши вăл тесе, пĕррехинче Ли ун хыççăн курăни-курăнми кайрĕ те — шалтах тĕлĕнчĕ. Чĕрĕп пек çеç хăй, çак мăчи*, çĕленсемпе, тыркаспа, каюрапа çапăçать иккен. Çапăçнипе çеç те сахалха, чылай чухне çĕнтерет вĕсене. Вара çисе ярать.

Çуралнă чĕрчупăн пурăнмалла-çке мĕнле те пулин.

Тата ку тăрăхри чăхсене илĕр. Вĕсем çерем çинче сикекен шăрчăксене хăвала-хăвала çитсе сăхаççĕ. Çавсемпех тутă вĕсем.

Çĕрпӳртсем лапчăк тăрăллă. Ли амăшĕ унта чемччук лартнă. Ваттисен йăлипе кăмака çăварĕ пурин те пӳрт тулашĕнче. Ли ашшĕне амăшĕ кăмака умĕнче шараçланассĕ. Хĕпĕртет Ли. Кĕçех ак ăна апат çиме чĕнессĕ. Вара вăл вир хуралне каять. Кăнтăр хĕвелĕ хытă пĕçертме тытăнсан, килсе шыва кĕрет. Вăл вăхăтра хир сыснисем вăрмантан тухасран хăрамалла мар — шăрăха юратмассĕ вĕсем.

* * *

Пĕр каçхине вĕсен урамĕнче машина сасси илтĕнсе кайрĕ. Алăк каррине карт! туртса татрĕç. Пĕчĕк хунар йăлтăр çуталчĕ. Япони салтакĕсем иккен.

— Лай-ла! (Çитрĕмĕр!) — терĕ вĕсене ертсе килнĕ китаец.



Ли ашшĕ тăрса тумланма тытăнчĕ.

— Шима-ши? (Мĕн пулчĕ?) — терĕ вăл хуллен.

— Ни ши ого-жень, ши бу-ши? (Эс вырăс-и?)— ыйтрĕç унран.

— Çук, эпĕ Хань ывăлĕ. (Китаец),— пĕлтерчĕ Ли ашшĕ.

— Эс вырăс! Ка-му-нист! — терĕç салтаксем. Ана ик енчен тытрĕç те урама танкăлтаттарса тухрĕç. Машина алăкĕ уçăлса хупăнчĕ.

Ли амăшĕ пĕтĕм урама илтĕнмелле кăшкăрса ячĕ:

— Хăтарăр! Хурахсем тапăнчĕç! Ялйыш, пулăшă... — терĕ те сасси пăч пулчĕ. Каллех тимĕр алăк уçса хупрĕç.

Сысна çури çухăрса янăччĕ, пăшал кĕрслетрĕ те, вăл сас та йăмрĕ.

Юлашкинчен урама пĕчĕк Ли чупса тухрĕ. Такам ăна «Ка-мун чĕппи» тенине илтрĕ вăл, хăй темĕн çумне кайса çапăннине туйса юлчĕ.

Ли тепĕр икĕ кунтан тăна кĕчĕ. Пичĕ йăмăхса ларнă ун. Айăкĕ ыратать. Хырăмĕ выçнă ачан...

Ашшĕпе амăш пирки ыйтсан, кӳршĕ карчăкĕ ăна «çук ĕнтĕ сан вĕсем, вĕлернĕ вĕсене», теме тăнăскере пĕр старик пӳлчĕ:

* Япони оккупанчĕсене 1930 çулсенче Китай çыннисем панă ят (авт.).

* Лутра чĕрчуна (сынна та) тăрăхласа çапла калаççĕ.

